24-мĕш çул тухать. Хаке 10 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕ[illegible]

1941
МАРТ
7
ЭРНЕКУН
55 (5770) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Эпир пурте государство тарçисем

Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе пирĕн тăван çĕршыври ĕçсыннисем хăватлă та тĕреклĕ социализмлă государство туса хучĕç, çак государствăн çирĕплĕхне капитализмлă государствăсенчен кирек-хăшĕ те ăмсанма пултарать. Совет государстви гигантла пысăк творчествăллă ĕç туса пырать, миллионшар çынсен—коммунизм строителĕсен вăй-халне пĕрлештерсе пĕртен пĕр тĕллев патне илсе пырать. Октябрьти социализмлă революцин историллĕ çĕнтерĕвĕсене пирĕн государство хăйĕн мĕнпур хăвачĕпе, хăйĕн законĕсен мĕнпур вăйĕпе сыхласа тăрать, хуçалăхпа культура строительствин большевикла планĕсене тултарассине организацилесе тата пурнăçа кĕртсе пырать, коммунизмăн аслă та чаплă суртне тăвать. Пирĕн мĕнпур законсен тĕллевĕ—социализмлă государствăна çирĕплетесси, обществăллă пуянлăха ӳстерсе пырасси, социализмлă харпăрлăха сыхласси, халăхăн пурнăç ырлăхĕсене ӳстерсе пырасси пулса тăрать. Государство интересĕсем мĕнпур ĕçсыннисен интересĕсемпе пĕтĕмĕшпех килĕшсе тăраççĕ. Социализмлă обществăра çынăн личнăй интересĕ мĕнпур государство нушисемпе тата задачисемпе сыхăнса тăрать. Кам та пулин государствăна обществăна сиен кӳрекен ĕçсем тăвать, совет государствин законĕсене пăсать пулсан, çакăнпа вара вăл хăйпе пĕрле пурăнакан граждансен пĕтĕмĕшле интересĕсене те сиен кӳрет.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнче Маленков юлташ çапла каларĕ: «Большевикăн государство интересĕсем, хăйĕн тăван çĕршывĕн интересĕсем нимĕнрен те çӳлерех тăма тивĕçлĕ. Партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре большевик дисциплинăллă çын пулма тивĕçлĕ. Закон вăл—пуриншĕн те закон. Эпир пурте государство тарçисем. Çакна вĕрентет пире Сталин юлташ».

Эпир пурте государство тарçисем. Пирĕн мухтавлă историн çакăн пек тапхăрĕнче, большевиксен партийĕпе совет правительстви çĕршыв умне калама çук пысăк задача—1941 çулти социализмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен çулĕнчи халăх хуçалăх планне чыслăн тултарас задача лартнă вăхăтра çак сăмахсем уйрăмăнах вăйлăн тата уççăн янăраççĕ. Çак план вăл государство законĕ. Вăл—пуриншĕн те закон. Мĕнпур парти, хуçалăх, совет работникĕсем государство тарçисем пулса тăраççĕ, вĕсем—çак закона вĕçне çитиех пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ çынсем.

1941 çулти халăх хуçалăх планне тултарас ĕçе ĕçсыннисем пысăк çĕкленӳпе хавхаланса тытăнчĕç. План миллионшар çынсем килĕшӳллĕн, тӳрĕ камăлпа, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хушать,—кашни çынах хăйĕн вырăнĕнче, станок патĕнче, трактор çинче хăйĕн уменче пĕтĕм государствăна курса тăма, хăй государство тарçи пулнине ăнланма, хăй пĕтĕм сăнчăрăн пĕр сыпăкĕ пулса тăнине пĕлме тивĕçлĕ. Кам çак тапхăрта хăйĕн ансăр интересĕсем хыççăн е ведомствăллă, группăллă интерессем хыççăн кайса аяккалла пăрăнать, кам пĕр хăй çинчен кăна, хăйĕн ведомствăри интересĕсем çинчен кăна шухăлать,—çавă пĕтĕм çĕршыва малалла кайма чăрмантарать, пĕтĕм халăх производствин графикне пăсать.

Пирĕн хушăра хăйсен чарусăр ирĕккине государство ирĕкĕнчен, законсенче, партипе правительство решенийĕсенче палăрса тăракан государство интересĕсенчен çӳлерех хуракан çынсем пулма тивĕçлĕ мар!

1941 çулти халăх хуçалăхĕн планне тултарас ĕç плана пăсакан пĕтĕм тата мĕнпур çынсене хирĕç пĕр хĕрхенмесĕр çирĕппĕн кĕрешме те хушать. Ун пек çынсем пирĕн патра чылаях пурха, пирĕн хуçалăхăн, государствăн, партин аппаратĕнче чылай звенисенче халĕ те пур-ха вĕсем. Вĕсем рядовой работниксем хушшинче тата руководительсем хушшинче те пур-ха. Совет предприятийĕпе учрежденийĕн руководителĕ государствăн пĕрремĕш тарçи, совет законноçĕн пĕрремĕш хуравçи пулма тивĕçлĕ. Шăпах вăл ĕнтĕ хăйĕн сотрудникĕсенче совет законне, совет планне тарăннăн, çирĕппĕн хисеплес туйăма, çирĕп дисциплина туйăмне воспитани парса çитĕнтерме тивĕçлĕ. Закона пурнăçа кĕртессинчен хăй пăрăнакан, закона пăсма кукăр çулсемпе хушăксем шыракан мĕскĕн руководитель государствăн пысăк та кирлĕ хуçалăхлă-организаторла функцийĕсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пыма пултартăр-ха? Сталин юлташ «вельможăсем» пулса тăнă çынсем çинчен каланă сăмахсене асра тытмалла. Çакăн пек çынсем пур: «вĕсем партипе совет законĕсене пирĕншĕн мар, ухмахсемшĕн çырнă тесе шутлаççĕ. Çаксем вĕсем шăпах ĕнтĕ партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртесси хăйсен обязанноçĕ пулать тесе шутламан тата, çапла вара, партипе государство дисциплинин никĕсĕсене çĕмĕрекен çынсем».

ССР Союзĕн Государство контролĕ çавăн йышши мăнкăмăлланса кайнă «деятельсене» хăлхаран тытса хĕвел çутине тăпăлтарса кăларать. Акă Главлесосбытăн Мускаври сбытовой конторин управляющийĕ Горбунов. Вăл фондра палăртман лесоматериалсене законсăр йĕркепе контора сотрудникĕсене сутма ирĕк панă, урăхла каласан, чăннипе, социализмлă харпăрлăха вăрласа пĕтерме пулăшнă. Вăл вăрман материалĕсене ытти çынсене те пĕр законсăр йĕркепе сутнă, социализмлă харпăрлăха çапла çаратса пĕтернă çине Наркомлесăн нумай работникĕсем лăпкăн пăхса ларнă.

Хăшпĕр учрежденисенче руководительсем, закона пăхмасăр тата государствăна сиен кӳрсе, штатлă окладсене палăртас ĕçре государство средствисене пĕрре те шеллесе тăман. Окладсене законсăр йĕркепе ӳстернине тӳрре кăларас тесе, хăшпĕр учрежденисемпе сиенлĕ подразделенисем туса тултарнă, вĕсене ертсе пыма начальниксем, заведующисем тата вĕсен заместителĕсем туса лартнă. Çапла, сăмахран, БССР Наркомлегпромĕнче оперативлă 21 работник пуçне 22 начальник пулнă.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕнчи тата СССР Верховный Совечĕн VIII Сессийĕнчи пренисенче государство тарçисем пулма кăмăлламан, «закона» хăй айне хунă тата çакăнпа вара хăй законран çӳлерех тăнине кăтартса панă Щедрин чиновникĕ евĕрлĕ çынсен сăн-сăпатне уçса кăтартрĕç. Вĕсем—тĕрлĕрен ведомствăсен работникĕсем, вăл шутрах вĕсен руководителĕсем те. Партипе правительство решенийĕсене хисеплеменшĕн, халăх хуçалăх планĕсене тăтăшах тултарса пыманшăн хăшĕ-пĕрисене çирĕпĕн асăрхаттарчĕç.

Вырăнти Советсен исполком председателĕсен ячĕсене, вăл шутра ĕççынни депутачĕсен Калинински Советăн исполнительнăй комитет председателĕн Староторжский юлташăн ятне асăнчĕç. Староторжский юлташ чылай организацисенчи работниксен ĕç укçисене хăпартасси çинчен законсăр решени йышăннă кăна мар. Çак решени законсăр ăпала пулнине кăтартса панă финанс работникĕ çине администраци енĕпе наказани хунă.

Çакăн пек хуçалăнни совет законĕ тăрăх мар, «манăн алă—владыка» текен принциппа пулса пырать. Запорожье облаçĕнче партин Б.-Токмакски райкомĕн секретарĕ те çав принцип тăрăх ĕçленĕ пулас, вăл Киров ячĕпе тăракан заводăн директорне СССР Судостроительнăй промышленность Халăх Комиссарĕ панă пĕтĕмĕшпех тĕрĕс распоряженине пурнăçа кĕртмеле мар, тесе сĕнӳ панă. Çак ĕç çинчен Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцире каласа парса, Бурмистенко юлташ çапла хушса каларĕ: «çак секретарь хăй единоначалиние пысăкăн пăснине тата директора законсăр çул çине—нарком распоряженине, директор обязательнах пурнăçа кĕртме тивĕçлĕ распоряжениие пурнăçа кĕртмесĕр хăварас çул çине тĕкнине ăнланмасть».

Совет государстви, хуçалăхăн, парти аппаратĕн пур звенисенче те закона çирĕппĕн пăхăнса тăмалла тăвасси вăл—совет общественноçĕн мĕнпур органĕсем умĕнче, пуринчен малтан парти организацийĕсем умĕнче тăракан пысăк та кирлĕ задача. Çакна тума ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсем хушаççĕ, мĕншĕн тесен совет законноçĕпе дисциплинăран пăрăннисене хирĕç татăклăн та çирĕппĕн кĕрешсе пынипе кăна 1941 çулти халăх хуçалăх планне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме пулать. Хăйсен интересĕсене е ведомствăллă интересĕсене государство законĕнчен çӳлерех хуракан çынсем çине çемçе кăмăлпа пăхни вăл—совет çыннисен ăс-тăнĕнче пĕтсех çитмен капитализм юлашкийĕсем çине çемçе кăмăлпа тата оппортунистла пăхни пулса тăрать.

Социализмлă харпăрлăха çаратса пĕтересрен çирĕпрен те çирĕп сыхлама, социализмлă государствăна сиен кӳрекен, государство кăсъине кĕрсе кайма пăхакан çынсене хирĕç кĕрешме законсем кăларнă, вĕсем—оборудованипе материалсене сутма, улăштарма тата урăх çĕре пама чарасси çинчен, брака тата брак тăвакансене хирĕç кĕрешесси çинчен, прогулсене, пĕр предприятирен тепĕр предприятине хăйсен ирĕкĕпе куçса каякан, производствăна дезорганизацилекен çынсене хирĕç кĕрешесси çинчен кăларнă законсем. Çак законсене пăхăнса тăрасси, вĕсене пурнăçа кĕртсе пырасси—кашни совет работникĕн, партире тăракан тата партире тăман кашни большевикăн пирвайхи тивĕçлĕхĕ. Предприятипе учреждени руководителĕ вăл—халăх закона сыхлама тăратнă, пĕрмаях çав вырăнта тăма тивĕçлĕ часовой.

Эпир пурте государство тарçисем. Закон вăл—пуриншĕн те закон. Парторганизацисен массăллă-политикăллă ĕçĕнче социализмлă демократин çак чаплă идейи тапса тăма тивĕçлĕ.

(«ПРАВДА» умстатьи, мартăн 6-мĕш.).

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чирчикри электрохимически комбината И. В. Сталин юлташ ятне парасси çинчен

Чирчикри электрохимически комбинатри рабочисемпе служащисем, çавăн пекех Узбек ССР Республикинчи ертсе пыракан парторганизацисемпе совет организацийĕсем ыйтнине пурнăçа кĕртсе, Чирчикри электрохимически комбината **И. В. Сталин** юлташ ятне парас.

ССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 5-мĕш.

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Пысăк Памир трактне И. В. Сталин юлташ ятне парасси çинчен

Таджик ССР Республикинчи ертсе пыракан парторганизацисемпе совет организацийĕсем тата колхозниксемпе колхозницăсем—Пысăк Памир тракчĕн строительстви участникĕсен ыйтнине пурнăçа кĕртсе, тракта **И. В. Сталин** юлташ ятне парас.

ССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти мартăн 5-мĕш.

ССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Наркомачĕн Мускаври хладокомбинатне А. И. Микоян юлташ ятне парасси çинчен

Мускаври хладокомбинатри обществăллă организацисем ыйтнине тата ССР Аш-какайпа сĕт-çу Халăх Комиссариачĕн ходатайствине пурнăçа кĕртсе, Мускаври хладокомбината **А. И. Микоян** юлташ ятне парас.

ССР Верховный Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССР Верховный Совет Президиумĕн
Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти мартăн 5-мĕш.

ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене пани

Мартăн 5-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ СССР Госпланĕн ытларах тава тивĕçлĕ работникĕсен группине, Госплан 20 çул тултарнине паллă тăвас шутпа тата халăх хуçалăхне планлас ĕçре тунă çитĕнӳсемшĕн наградăланă работниксен группине орденсемпе медальсем панă.

Орденсемпе медальсене çаксем илнĕ: ССР Госпланĕн председателĕ Н. А. Вознесенский юлташ, унăн заместителĕсем — М. З. Сабуров, С. Ф. Демидов, А. Ф. Зеленовский, Н. И. Кирпичников, В. В. Кузнецов, А. Д. Панов тата СССР Госпланĕн ертсе пыракан ытти чылай работникĕсем.

— Госплан работникĕсен коллективĕ çине хунă пысăк шанăса, — тенĕ Вознесенский юлташ, — эпир тӳрре кăларăпăр, халăх хуçалăхне планлас ĕçе малалла илсе пырăпăр.

Награда илнисем Вознесенский юлташăн çак сăмахĕсене саламласа алă çупаççĕ.

ССР Госпланĕнчи партком секретарĕ Г. Т. Зайцев юлташ кĕске сăмах тухса калать.

М. И. Калинин юлташ награда илнĕ работниксене саламласа кĕске сăмах каланă.

— Паян, — тенĕ Калинин юлташ,— Госплан работникĕсем награда илеççĕ. Эпĕ çапла шутлатăп: Госплан вăл — социализм строительствинчи пысăк тапаха оргăнсенчен пĕри пулса тăрать.

Пирĕн социализм строительствинче Госплан мĕнле вырăн йышăнса тăрать-ха?

Социализмлă хуçалăхăн кашни отраçли, хăйне уйрăмăн илсен вăл кирек мĕнле хаклă вырăн йышăнса тăрать пулсан та, вăл уйрăм отрасль кăна пулса тăрать, хуçалăхăн уйрăм отраçлисенчи уйрăм работниксен чылаях пысăк групписене наградăланă чухне кăтартса панă çитĕнӳсем вĕсем—ĕçĕн пĕр паллă отраçлин çитĕнĕвĕсем пулса тăраççĕ.

— Планировани вăл, — тет Калинин юлташ,—пĕтĕмĕшле плансене, пĕтĕмĕшле ĕçсене сырса паллă туни коммунизм патне пымалли тӳрĕрех, практикăра пурнăçа кĕртме çăмăлрах çулйăр шыраса тупни пулать. Планировани вăл—социализм тăвас шутпа, коммунизмлă общество туса хурас шутпа пĕтĕм ĕçе координацилени пулса тăрать.

Пирĕн государствăра правительство валли, коммунистла партя валли чи ответлă ĕççенчен пĕри вăл — планировани пулса тăрать. Çак ĕçе тума пысăк квалификацияллĕ çынсем кирлĕ, çак пысăк квалификацияллĕ çынсем коммунистсем кăна мар (пирĕн партире лайăх коммунистсем нумай), вĕсем тата пĕлекен марксистсем пулни кирлĕ, вĕсем, марксизм-ленинизм вĕрентнĕ тăрăх ĕçлесе, нумай хисеплĕ мĕнпур отраçлисене халăх хуçалăхĕн пĕрлĕхлĕ планне кĕртсе сыхăнтарма пĕлекен, çак плана пирĕн партин пĕртен-пĕр тĕллевне — коммунизм тăвас ĕçе пăхăнтарса пыма пĕлекен çынсем пулмалла.

Пуринчен малтан сире награда илнĕ ятпа сывлăх сунса саламлама ирĕк парăр. Партипе правительство çынсене пысăк çитĕнӳсемшĕн кăна награда параççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, сире хăвăрăн ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума сунмаккăн ирĕк парăр.

— Госплан çитĕнĕвĕсем, — тенĕ юлашкинчен Калинин юлташ,—çакăнпа пĕрлех пирĕн халăх хуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем, пирĕн халăхăн çитĕнĕвĕсем, пирĕн партин çитĕнĕвĕсем пулса тăраççĕ! (**Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ**). (ТАСС).

Хĕрарăмсен мартăн 8-мĕшĕнчи ĕçĕ çинчен

ССР Совнаркомĕ хĕрарăмсен мартăн 8-мĕшĕнчи ĕçĕ çинчен ВЦСПС йышăннă çакăн пек постановлениие çирĕплетнĕ:

Мартăн 8-мĕшĕнче хĕрарăмсем тулли ĕç кунĕ ĕçлемелли тăвасси çинчен работницăсемпе хĕрарăм-служащисенчен сĕнӳсем килнĕ май, Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ çапла йышăнать: работницăсен тата хĕрарăм-служащисен пуçарăвĕпе килĕшсе, çапла тăвас: мартăн 8-мĕшĕнче предприятисемпе учрежденисенче хĕрарăмсен тулли ĕç кунĕ ĕçлемелле.

Топливо бази ӳссе пырать

Иртнĕ çул Кизелра вырăнта усă курмалли 3 шахтăна юсаса ĕçе янă тата çĕнĕ шахта тунă. Хальхи вăхăтра çак тăватă шахта больницăсене, прачечнăйсене, мунчасене т. ыттисене хутса ăшăтма топливо параççĕ. Кăçалхи çул вырăнта усă курма тăвакан татах 5 шахта ĕçе кĕрет.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Сирĕн пата, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслă çулпуçĕ, большевиксен партин ăслă руководителĕ, пирĕн юратнă атте, учитель тата тусăмăр патне, Чăваш АСС Республикинчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ, республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе, большевикла хĕрӳллĕ салам ярать!

Большевикла парти ертсе пынипе, пирĕн çĕршыври социализмлă çĕрĕçĕ иртнĕ çулта çĕнĕ те пысăк çĕнтерӳсем турĕ. Колхозсемпе совхозсен çитĕнĕвĕсене 1940 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче уйрăмăнах уççăн кăтартса панă.

Малта пыракан, халиччен никам курман пысăк тухăçлă тырпул туса илекен, вылăх-чĕрлĕхĕн продуктивлăхне хăпартса пыракан, обществăллă хуçалăхне çирĕплетсе пыракан колхозсен, бригадăсен, ялхуçалăхĕнчи тахановецсен хисепĕ кунран кунах ĕссе пырать.

Ялхуçалăхĕнчи çак çитĕнӳсене колхоз хресченĕсем ВКП(б) Центральный Комитечĕ, совет правительстви тата Эсир, Сталин юлташ, ăслăн ертсе пынипе турĕç.

Эсир социализмлă ялхуçалăхне çĕклентерсе пырассишĕн, колхозсене пур майпа та аталантарса тата çирĕплетсе пырассишĕн, ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн пĕрмаях тăрăшни колхозниксене çĕнĕ те çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пыма хаваслантарать.

Партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пырса, Чăваш республикинчи колхозсем 1940 çулта, 1939 çултипе танлаштарсан, тырпул тухăçне 41 процент ӳстерчĕç. Социализмлă çĕрĕçĕнче малта пыракансем çĕршерĕн ӳссе çитĕнчĕç, вĕсем сталинла вăйлă тухăçлă тырпул туса илчĕç тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре те лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Анчах та, малта пыракансен примерĕ кăтартнă тăрăх, пирĕн республикăри колхозсен татах та вăйлăрах тухăçлă тырпул туса илме, обществăллă выльăх-чĕрлĕхсенчен татах та нумайрах усă илме питех те пысăк майсем пур.

Эпир Сире, Сталин юлташ, Чăваш республикинчи колхозниксем малта пыракансен опытне пур колхозсене те, совхозсене тата машинно-тракторнăй станцисене çитерес, 1941 çулта ялхуçалăх культурисен тухăçне, выльăх-чĕрлĕхсен продуктивлăхне татах та ытларах ӳстерес тĕллĕпе пĕтĕм вăя тата пĕтĕм пĕлĕве хурса ĕçлĕç,—тесе сăмах паратпăр.

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕн решенийĕсем пире малашне те паттăрăн ĕçлеме, колхозсен обществăллă хуçалăхне пур майсемпе те çирĕплетсе пырассишĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн экономикăллă тата оборонăллă вăй-хăватне малалла тĕреклетессишĕн вăя шеллемесĕр кĕрешсе пыма хĕçпăшаллантараççĕ.

Сывă пултăр большевиксен Пĕтĕм Союзри Коммунистла Партийĕ!

Сывă пултăр большевиксен партин ленинла-сталинла Центральный Комитечĕ!

Сывă пултăр пирĕн çуллуç тата учитель, пирĕн тăван Сталин юлташ!

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ

Енер, мартăн 6-мĕшĕнче, Советсен çурчĕн ларусем пулакан залĕнче ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ уçалчĕ. Канашлăва ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Пивоваров юлташ сăмах каласа уçрĕ.

— Иртнĕ 1940 çул тулашри сталинла ăслă политикăн нумай мухтавлă çĕнтерĕвĕсен çулталăкĕ пулса, социализмлă промышленноçпа ялхуçалăхĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен çулталăкĕ пулса пирĕн çĕршыври коммунизм строительствин историне кĕрет, — тет Пивоваров юлташ.

Малалла вăл 1940 çулта республикăри колхозсем тунă пысăк çитĕнӳсене палăртса, кăçал ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен калать.

Пивоваров юлташ хăйĕн сăмахне:

— Сывă пултăр колхозлă хресченсен юратнă тусĕ тата çулпуçĕ Аслă Сталин! — тесе вĕçлерĕ.

Канашлу участникĕсем пурте ура çине тăрса нумайччен алă çупрĕç, вĕсем халăхсен аслă çулпуçне, учительне тата тусне Аслă Сталина ăшшăн саламларĕç.

Пивоваров юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕ уçални çинчен пĕлтерет.

Йĕпреç МТС директорĕ Свешников юлташ сĕннипе канашлу президиумне 35 çынран суйларĕç.

Президиум членĕсем хушшинче ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Чарыков, Пивоваров, Павлов, Ахазов, Матвеев юлташсем, ЧАССР Совнаркомĕн председателĕ Сомов юлташ, КПК уполномоченнăйĕ Серов юлташ, ЧАССР Верховный Совет президиум председателĕ Андреева юлташ, ВЛКСМ обкомĕн секретарĕ Пароятников юлташ, Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ, ЧАССР Шалти Ĕççен Халăх Комиссарĕ Белолипецкий юлташ, Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Коротков юлташ, «Динамо» колхоз председателĕ Рыбаков юлташ т. ыт. те. Канашлу секретариатне 5 çынтан суйларĕç.

Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз председателĕ орденоносец Коротков юлташ республикăри канашлăвăн хисеплĕ президиумне суйлама сĕннине участниксем алă çупса йышăнаççĕ.

Çавтери пысăк çĕкленӳпе тата нумайччен алă çупса хисеплĕ президиума: **Сталин, Молотов, Ворошилов, Калинин, Л. М. Каганович, Микоян, Андреев, Жданов, Хрущев, Шверник, Берия, Вознесенский, Щербаков, Маленков** тата **Димитров** юлташсене суйларĕç.

Кун йĕркине çирĕплетнĕ хыççăн, 1940 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен итогĕсем тата 1941 çулти задачăсем çинчен Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ В. Григорьев юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх пренисем пуçланчĕç. Пренире çак юлташсем тухса каларĕç: Евдокимов (Чăвашсен зоотехникăллă опытлă станцин директорĕ), Корлинов (Первомайски районри «Авангард» колхозран), Блинова (Çĕрпӳ районĕнчи овощевод), Никитин (Первомайски районри «Комсомолец» колхозăн ферма заведующийĕ), Михеев (Вăрнар районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ).

Канашлу участникĕсем халăхсен çуллуçĕ аслă Сталин патне саламла çыру яма йышăнчĕç.

Çакăнпа каçхи лару хупăнчĕ.

Г. К. Орджоникидзе çуралнă пӳрте реставрацилеççĕ

ТБИЛИСИ, мартăн 5-мĕш. (ТАСС). Грузин ССР Совнаркомĕ Гореша ялĕнчи пӳрте — Г. К. Орджоникидзе çуралнă тата ача чухне пурăннă пӳрте,— реставрацилесси çинчен решени йышăннă. Пӳрт çине мемориальнăй хăма çакса хурарĕç. В. И. Ленин музейĕн филиалĕ çак пӳртре библиотека-читальня уçать, Орджоникидзе пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартса паракан документсемпе материалсен выставкине организацилет.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ И. П. Сергеев юлташа СССР Боеприпассен Халăх Комиссарĕн обязанноçĕсенчен хăтарса, **П. Н. Горемыкин** юлташа СССР Боеприпассен Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартнă.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмалла): генерал-полковник, Совет Союзĕн Геройĕ М. П. Кирпонос юлташ, Совет Союзĕн Геройĕ тата Маршалĕ Г. И. Кулик юлташ тата Арми генералĕ И. В. Тюленев юлташ. Ф. Кислов фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тĕплĕн хатĕрленмесĕр иртternĕ юлташла калаçу

Юлашки вăхăтра Шупашкар районĕнче теорилле ыйтусем тăрăх тата парти историйĕ тăрăх юлташла калаçусем сахал мар иртереççĕ. Ку вăл, юлташла калаçусем иртterни, политикăна харпăрăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма кирлĕ; харпăрăй тĕллĕн вĕренекенсен уйрăм ыйтусем тăрăх пĕрпĕринпе канашламалла, ыйтусене хăйсем тĕрĕс ăнланнине тĕрĕслесе пăхмалла тата пĕлӳсене çирĕплетсе хăвармалла.

Анчах хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисенче юлташла калаçусене тĕрĕс мар, формальнă, школярла иртереççĕ, иртнĕ вăхăтри пек яп-ăх ĕçлекен кружоксем туса хураççĕ. Çакă вăл пуçламĕш парторганизацисен секретарĕсем тата консультантсем ЦК ВКП(б) партиллĕ пропагандăна йĕркелесе ярасси çинчен йышăннă постановление халичченех тĕрĕс ăнланманнинчен килет. Çавăнпа вĕсем партиллĕ пропаганда ĕçне кивĕ методсемпе «ертсе пыма» тытăнаççĕ.

Çапла, сăмахран, Шупашкар райсоветĕн исполкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче юлташла калаçусене коммунистсен пурин те çӳремелли занятисем туса хунă. Юлташла калаçу хăш вăхăтра тата мĕнле темăпа пулмаллине малтанах палăртса хунă та, коммунистсене пурне те, вĕсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» хăш сыпăкне вĕреннине пăхмасăр, çав юлташла калаçусене çӳреме хушаççĕ.

Ку пуçламĕш парторганизацинче февралĕн 25-мĕшĕнче пулнă юлташла калаçу пĕр сехет хушши пычĕ. Калаçу теми — «Большевикла хаçат «Правда». IV Государственнăй думăри большевикла фракци» («ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» V-мĕш сыпăкĕ, 2-мĕш уйрăм). Калаçува ертсе пыракан Хабаров юлташ: иртнĕ калаçура эпир V-мĕш сыпăкăн 1-мĕш уйрăмĕ тăрăх калаçнăччĕ, паян ĕнтĕ 2-мĕш уйрăмĕ тăрăх калаçмалла, тесе пĕлтерчĕ.

Юлташла калаçура сӳтсе-явма çакăн пек ыйту лартрĕç «Большевикла хаçат «Правда» мĕнле вырăн йышăнса тăнă?». Малтан Кузьмин юлташ (райсовет исполкомĕн общий отделĕн заведующийĕ) тухса каларĕ. Вăл: «Правда» хаçат рабочисене 1905 çулти революцин характерĕ çинчен вĕрентнĕ, 1905 çулти революци 1917 çулти революцин репетицийĕ пулнă, терĕ те унăн сăмахĕ вĕçленчĕ. «Правда» хаçат мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен Кузьмин юлташ нимĕн чухлĕ те сутатса параймарĕ.

Унтан Смирнов юлташ (пуçламĕш парторганизаци секретарĕ) сăмах илчĕ те: ку ыйту тăрăх мĕн каламаллине Кузьмин юлташ каларĕ, «Правда» хаçат кашни кун тухса тăни çинчен кăна каламасăр хăварчĕ, терĕ. Пурĕ ултă çын тухса каларĕç, анчах сӳтсе-явма лартнă ыйтăва тĕплĕн çутатса пани пулмарĕ.

Тухса каланă юлташсем пĕри те юлташла калаçăва хатĕрленсе пыманни курăнчĕ. Консультанта ыйту паракансем пулмарĕç, ун вырăнне, Хабаров юлташ хăй ыйтусем парса пычĕ.

Унтан большевиксем легальнăй организацисенче çĕнтерни çинчен калаçма тытăнчĕç.

— Кам тухса калас тет ку ыйту тăрăх? — ыйтать Хабаров юлташ.

Анчах никам та сăмах ыйтмарĕ. Вара Хабаров юлташ çак ыйтăва çитес калаçура сӳтсе-явăпăр, терĕ.

Курăнсах тăрать ĕнтĕ, кун пек калаçу — юлташла калаçу мар, начар кружок кăна. Юлташла калаçăва (кружок занятине те çавах) юлташла дискусси формипе ирттермелле.

Харпăрăй тĕллĕн вĕренекен юлташсемпе юлташла калаçусем ирттерни питех те кирлĕ. Анчах вĕсене тĕплĕн хатĕрленсе, вĕренекен юлташсем хăйсем кăларса тăратакан ыйтусене сӳтсе-явма тата ЦК ВКП(б) хăйĕн постановленийĕнче кăтартса панă пек тĕрĕс организацилесе ирттермелле.

Ф. ИВАНОВ.



Февралĕн 27-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ наградӑланисене орденсемпе медальсем панă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССР Союзĕн орденĕсемпе наградӑланисем. Сулахайран сылтăмалла: контр-адмирал С. М. Воробьев, генерал-лейтенант Г. Г. Соколов тата генерал-майор Г. А. Петров.

А. Грибовский фото-ӳкерчĕкĕ (ТАСС).

Хаçат ĕçĕ лайăхланса пырать

ВКП(б) Центральный Комитечĕ иртнĕ çулта районсенчи хаçатсем пирки решени йышăннăранпа Комсомольски районри «Октябрь ялавĕ» хаçатăн ĕçĕсем чылаях лайăхланни палăрать. Малтанхи вăхăтра, постановлени тухиччен, редакцинче ĕçлекенсем хаçат ĕçне ĕçсыннисен сарлака массине — рабочисене, колхозниксене, ялхуçалăх специалисчĕсене сахал явăçтарнă. Редакци работникĕсем хаçата хăйсен материалĕсемпе тултарма тăрăшнă. Рабочисемпе колхозниксем тата ялхуçалăх специалисчĕсем 5—6-шар уйăх хушши гонорар илеймен. Ĕçсыннисен çырăвĕсене хирĕç ответ памасăр тăнă.

Районри ĕçсыннисемпе çирĕп сыхăну тытман. Çавна пула хаçат район пурнăçĕнчен юлса пынă. Ялхуçалăх специалисчĕсен материалĕсене хаçатра сайра-хутра кăна курма пулнă. Райхаçат тиражĕ питĕ сахал пулнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Редакцинче ĕçлекен работниксем тата типографинче ĕçлекенсем тăтăшах улшăнса тăни хаçат ĕçне лайăхлатма чăрмантарнă. 13 уйăх хушшинче 19 работник улшăннă.

Юлашки вăхăтра, ВКП(б) Центральный Комитечĕн решенийĕ тăрăх ĕçе çĕнетсе урăхлатнă хыççăн, редакци ĕçĕ тĕпренех лайăхланчĕ теме юрать. Парти райкомĕ хăйĕн органĕн çине ыйтларах çавăрăнса пăхма тытăнчĕ. Райком работникĕсем—секретарьтен тытăнса инструктора çитичченех, хаçат çине çырса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра ялсовет, шкул, медицина работникĕсем, ялхуçалăхĕнче малта пыракансемпе специалистсем хаçат ĕçне активлăн хутшăнса, çырса тăраççĕ.

1941 çулти январь уйăхĕнче редакцине 200 çырăва яхăн килнĕ. Вĕсенчен 135 материалĕпе хаçатра усă курнă. Ыттисене ответ панă, е мерăсем йышăнма районри учрежденисене ярса панă.

ВКП(б) райкомĕ хăйĕн хаçачĕн ĕçĕсемпе ытларах интересленет. Январь уйăхĕн юлашки кунĕсенче райком райхаçат отчетне итлерĕ, ĕçе лайăхлатма паха сĕнӳсем парса хăварчĕ. Редакци халĕ кашни уйăх валли план тăвать, çав плана парти райкомĕ пăхса тухса çирĕплетет.

М. ЯКОВЛЕВ.

XVIII партконференци материалĕсем чăвашла тухаççĕ

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцинче Г. М. Маленков юлташ «Парти организацисен промышленность тата транспорт тĕлĕшĕнчи задачисем çинчен» тунă доклад чăвашла уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухрĕ. Тиражĕ 13.500 экземпляр, хакĕ 30 пус.

Çак куçсенчех партин XVIII конференцинче Вознесенский юлташ «1940 çулăн хуçалăхлă итогĕсем тата 1941 çулта СССР халăх хуçалăхне аталантармалли план çинчен» тунă доклад пичетленсе тухмалла.

Çавăн пекех Маленковпа Вознесенский юлташсен докладчĕсем тăрăх конференци йышăннă резолюцисене те чăвашла кăлараççĕ.

Н. ЮМ.

Суйлава хатĕрленетпĕр

Чапаевски поселокра пурăнакансем Чăваш АССР Верховный Совечĕн Президиумĕ ĕçсынни депутатĕсен Чапаевски поселок Советне депутатсем суйламалли кун çинчен тата суйлав кампанийĕ пуçланни çинчен кăларнă Указа пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç.

Халĕ суйлавçăсем хушшинче митингсем пулса иртреççĕ. Митингсенчен пĕринче Шупашкар хула Совечĕн депутатĕ Шишов юлташ тухса сăмах каларĕ.

— Эпир,—тет Шишов юлташ,—пирĕн поселока граждан вăрçи геройĕн, хамăр землякăн Василий Иванович Чапаевăн ятне панипĕн мухтанатпăр. Çавăнпа пĕрлех эпир ĕçсынни депутатĕсен Чапаевски поселок Советне суйлани пирĕн хатĕрленмелле, поселок Советне пултарулла çынсене суйламалла.

Суйлава хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать. Агитаторсем суйлавçăсем хушшинче йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Халĕ суйлавçăсен списокĕсене тума тытăннă.

Б. ШАВЕЛЕВ.

Пропагандист пулăшнипе

Кивтутайкассинчи (Октябрьски район) пуçламĕш парторганизацинче тăракан коммунистсем пурте парти историне тăрăшса вĕренеççĕ. Паянхи кун илсен, вĕсенчен пиллĕкшĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» саккăрмĕшпе тăхăрмĕш сыпăкĕсене тата кандидата çĕнĕрен илнĕ пĕр юлташ иккĕмĕш сыпăка вĕренеççĕ.

Коммунистсене парти историне вĕренес ĕçре пропагандист Греков юлташ аван пулăшса пырать. Вăл малтанах хатĕрленĕ, план тăрăх юлташла калаçусем ирттерет.

Кивтутайкассинчи пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Анисия Семенова юлташ (вăл ялсовет исполкомĕн председателĕ) хăйĕн политикăлла пĕлӳне ӳстерсе пырать, кулленхи ĕçре те тăрăшать. Çавăнпа ĕнтĕ Кивтутайкасси ялсоветĕнче паха çитĕнӳсем пулса пыраççĕ. Ялсоветĕнче кăçалхи пĕрремĕш кварталти финанс планне февралĕн 18-мĕш тĕлнех 95 процент тултарнă. Суракине хатĕрленес ĕç те аван пырать: вăрлăхсене сортласа хунă, машинсене юсанă, лашсем тĕреклĕ.

П. СЕРГЕЕВА.

ÇАМРĂК УЧИТЕЛЬСЕНЕ ПУЛĂШМА

Пуçламĕш шкулта грамматика урокĕсене ирттересси

Пуçламĕш шкулсенче те, туллимарвăтам шкулсенче те час-часах грамматика урокĕсем ачасене çитĕклĕ уççăн ăнланмалла, интереслентермелле, вĕсен ăс-тăнне хускатмалла пулса иртеймеççĕ. Учительсем чĕлхе явленисене сăнаттармасăрах вывод тăваççĕ, определенисем параççĕ, упражненисем туса çитĕклĕ çирĕплетмеççĕ. Çавăнпа ачасем чĕлхене çиелтен çеç вĕренсе пыраççĕ, çитĕклĕ çирĕп, практикăллă пĕлӳсем илеймеççĕ.

Ку ĕнтĕ, пĕр енчен, учительрен те килет. Акă, илер-ха Канаш районĕнчи Сиккасси шкулĕнче тăван чĕлхепе вĕрентекене. Вăл предложени членĕсене хăй те уççăн уйăрса илеймест. Определение вăл сказуемăйпа, обстоятельствăпа пăтраштарать. Çак предложенисенче: «Манăн тутăр шурă. Унăн кĕпи хĕрлĕ. Ку карандаш кăвак» — шурă, хĕрлĕ кăвак сăмахсене определени тесе çирĕплетет; «...лăпкăн, канăçсăр, шăппăн пăхать» сăмах сыхăнăвĕнче лăпкăн, канăçсăр, шăппăн сăмахсене определени вырăнне йышăнать. Камăллăх падежĕнче тăракан определенисене пачах уйăраймасть. «Тăхăр çулхи Ванька Жуков»...»—çулхи сăмаха çеç определени тет, тăхăр сăмаха пăрахса хăварать; «...пĕр чарăнмасăр çулать»,—кунта пĕр сăмаха уйăрса илсе, определени вырăнне йышăнма хатĕр. «Кăнтăрлахи апат...», «Пахчари курăк...» сăмах сыхăнăвĕсенче наречи е япала ячĕ определени пулнă тет. Пĕр урокрах ачасене мĕн чухлĕ пăтраштарса пĕтерчĕ. Ачасен пĕлӳне кун пек пăтраштарса пĕтерсен, кайран тĕрĕс çул çине кăларасси çĕнĕрен ăнлантарса парассинчен те хĕн, тата вырăс чĕлхине вĕреннĕ чухне те вăл питĕ кансĕрлет.

Тепĕр енчен, ку вăл ачасем вĕренекен учебникрен те килет. Акă, илерха 4-мĕш класс валли сырнă грамматика кĕнекине. Сăмахран, «глагол» е «хисеп ячĕ» темăсене илсен, тӳрех пур глагол вăхăчĕпе е пур йышши хисеп ячĕпе сыхăнса тăракан выводсене — определенисене, терминсене— малтан кăларса тăратнă, унтан глагол тĕрлĕ вăхăтра сăпатланнине вырнаçтарнă; çapa сăпатланнипе тулса тăрать, ачасене сăнаса тĕпчесе вĕрентмелли пĕр тĕслĕх те çук.

Учительсем те вара çав йĕркепех уроксене туса ирттерме тăрăшаççĕ. Ун пек уроксем, ачасене интереслентерме мар, йăлăхтарса çитереççĕ. Çав темăсене вĕрентнĕ чухнех уроксене ачасене сăнаттарса, хутшăнтарса ирттерсен, ачасем чĕлхене вĕренес ĕçне интересленеççĕ, уçăлса ataланса пыраççĕ.

«Глагол» темăпа вĕреннĕ чухне малтанхи урокра глагол мĕн иккенне çак йышши тĕслĕхсене сăнаса, тĕпчесе ăнланса илеççĕ:

а) Колхозниксем çуракине хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Чăштин-чăштин утă çулĕç сарă хĕрсем улăхра. Ачасем сăрт çинчен савăнăçлăн ярăнчĕç. Женя шкулта отлично вĕреннĕ.

б) Çурма хĕрринче шăппăн ларнă хура вăрман. Ывăçсем паттăр хуралçă пек тăнă.

Ку примерсенче глаголсем тĕрлĕ вăхăтра тăраççĕ, тата ĕç тунине те, выртни-тăнине те кăтартаканнисем те пур.

Пуринчен ытла тĕпченĕ чухне ыйтусене пĕлсе лартмалла килет. Тĕпчеме çакăн пек ыйтусем лартмалла: 1) Ку предложенире хăшĕ ят падежĕнчи япала ячĕ? 2) Колхозниксем мĕн тăваççĕ? 3) Хатĕрленеççĕ тени мĕне пĕлтерет?

Çак ыйтусемпех ытти предложенисене те пăхса тухма тивет.

4) Çапла аялтан туртнă глаголсем: хатĕрленеççĕ, çулĕç, ярăнчĕç, вĕреннĕ — мĕне кăтартаççĕ?

5) Ларнă, тăнă, выртнă—глаголсем мĕне-мĕне кăтартаççĕ?

6) Çапла аялтан туртнă сăмахсем мĕне-мĕне кăтартаççĕ?

7) Япала ĕç тунине, выртни-тăнине кăтартакан сăмахсене мĕнле калаççĕ?

8) Глагол ĕç хăçан-хăçан тунине кăтартать?

Çапла, ачасем тĕпчесе тухнă хыççăн икĕ вывод тăваççĕ. Выводсене учитель виç-тăват ачаран ыйтса, çавăнтах çирĕплетсе хăварать.

Малалла учитель ачасем ăнланса илнине çакăн йышши примерсемпе: «Илемлĕ çуркунне çитĕ. Вăрманта саркайăксем юрра янратĕç. Чаплă та хĕрӳ ĕçре сĕршывăмăр чечекленет. Карапупа ăшăхрах вырăн шыраса тупрĕ. Мĕнпур ӳсен-тăрана сарă та кĕрен сăн çапнă» — тата ачасен примерĕсемпе çирĕплетет.

Çак йĕркепех глаголăн хальхи вăхăчĕпе паллаштарать, урăхла класан, хальхи вăхăтри глаголсене предложенире тĕрлĕ сăпатра, хисепре илсе сăнаттарать. Иртнĕ урока аса илсе, киле панă заданине тĕрĕсленĕ хыççăн çакăн пек примерсем илет:

«Хĕле кĕнĕ ятпа сывлăх сунатăп. Тулли урам кĕрлет. Эсир пуринчен те хытă тăрăшатăр. Кĕмĕл саслăн кайăксем юрлаççĕ. Костер çуннă май илемлĕн юрра янтрататпăр. Вĕренетĕн, ĕçлетĕн, çивĕчленсе пыратăн». Ку тĕслĕхсенче глаголсем хăш сăпатра, мĕнле хисепре тăнине, хальхи вăхăт ĕç халь тунине асăхтаттарнă хыççăн, тăрăш, вĕрен глаголсене, морфологиллĕ пайсем çине уйăрса сăпатласа парать. Хальхи вăхăтăн формине сăпатлаттарса çирĕплетет.

Çак йĕркепех учитель глаголăн пулас вăхăчĕпе, курса иртнĕ вăхăтпа тата курмасăр иртнĕ вăхăтпа, хушу наклонении, глаголăн çуклăх формипе, хисеп ячĕпе, шут хисепĕпе, йĕрке хисепĕпе паллаштарать.

Пуçламĕш шкулта грамматика урокĕсене ирттернĕ чухне сăнани çапла паха вырăн йышăнать. Сăнани урлă выводсене — определенисене, терминсене, тĕрĕс çырмалли правилăсене ачасем хăйсем тавçăрса, чухласа ăнланса илеççĕ. Определенисем, терминсем, тĕрĕс çырмалли правилăсем, — вĕсем сăнанинчен тухса тăраççĕ, сăмахран, «курса иртнĕ вăхăт», «курмасăр иртнĕ вăхăт» терминсене 3-мĕш сăпатра сăнаттарса ăнланса илме пулăшать.

Выводсене учитель сăмахпа та, çырнипе те, упражнени туса та çирĕплетет. Иртнĕ уроксене аса илсе паянхи урокпа çыхăнтарни ачасен пĕлĕвне йĕркелет, системăна кӳртсе çирĕплетет.

Малтан ачасем чĕлхе явленисене сăнаш урлă ăнланса илеççĕ, унтан абстрактлă енĕсем çине куçса пыраççĕ; вĕреннĕ, пĕлекен япаларан пĕлмен, паллашмалли япала çине куçса пыраççĕ. Выводсене учитель ертсе пынипе ачасем активлăн хутшăнса хăйсем тăваççĕ.

Çапла грамматика урокĕсене ирттернĕ чухне те педагогика кăтартнă принципсене — конкретлă япаларан абстрактлă, пĕлекен япаларан пĕлменни çине куçса пырассине—тытса пынă. Педагогика е методика кăтартнă пек йĕркеленĕ урок çирĕп пĕлĕвĕн никĕсĕ пулса тăрать.

Е. РОМАНОВА.

Чăваш литературин чаплă произведенийĕ

Чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер çырнă «Хĕн-хур айĕнче» поэма Чăваш совет литературинче чаплă та вăйлă произведенисен шутне кĕрет. Çак историллĕ поэма тăрăх эпир чăвашсен XVIII ĕмĕрти пурнăçне куратпăр: пирĕн ума икçĕр çула яхăн ĕлĕк пулса иртнĕ ĕçсем сарлакан тухса тăраççĕ,—инçетри вăхăт!—анчах та, вĕсем пире паян кун та интереслентереççĕ, хумхантараççĕ. 1773 çулта казаксен чухăнĕсем хăйсене, хĕсĕрлекенсене хирĕç çĕкленеççĕ. Вĕсене ертсе пыраканнĕ вăйлă, ăслă, хастар Емельян Пугачев пулнă. Пугачев восстанийĕ майлă пулса Российăри тĕрлĕ халăхсем нумай çĕрте помещиксене, попсене тата ытти харампырсене хирĕç тухнă. Чăваш ĕçсыннисем те Е. Пугачев восстанине хастаррăн хутшăннă. Кун çинчен вырăссен аслă поэчĕ А. С. Пушкин акă мĕнле çырнă: «Пугачев Атăл урлă каçсан пурте хускалса кайнă. Атăлăн хĕвеланăç енĕ восстанине çĕкленсе самозванец майлă пулнă. Улпут хресченĕсем пĕлханса кайнă: урăх тĕнлисем тата тĕне кĕнисем вырăс священникĕсене вĕлерме тытăннă. Воеводăсем хуласенчен, дворянсем поместисенчен тарнă, хура халăх лешсене те, кусене те тытнă, вĕсене пур çĕртен те Пугачев патне иле-иле пынă. Пугачев халăха ирĕклĕх парасси çинчен, дворянсен пĕтĕм йăх-ăруне пĕтересси çинчен, хырăй-марăсене каçарасси çинчен тата ухмахăрах тăвар валеççе парасси çинчен пĕлтернĕ...» «Пугачев чăвашсене хысна çĕрĕсене валеççе парма хушнă; хресченсем илсе пынă темиçе дворянина çакса вĕлернĕ...»

Çакăн пек ĕçсем Улатăрта, Çĕрпӳре, Кăрмăшра пулнă, ун пек ĕçсем ялсенче те нумай çĕрте пулса иртнĕ. Хресченсем çĕрхуçисене, пуян усламçăсене çавăра-çавăра тытса тăпăлтарнă, чиркӳсем тăрринчен поп тавраш̆ĕсене тытă-тытă пăрахнă. Анчах та çак нумай çĕре сарăлнă пысăк вăрçă юлашкинчен поражени тӳснĕ. Е. Пугачев восстанийĕ те Болотников, Степан Разин, Булавин тата ыттисен восстанийĕ пекех пĕтнĕ. Вĕсен çăлтавĕ пĕтĕмпех ун чухнехи социальнă-экономикăллă условисенчен, пурнăç-йăларан килнĕ.

1775 çулти январьте Муксавра Е. Пугачева пуçне касса вĕлернĕ. С. В. Эльгерĕн поэминче тӳрремĕнех ĕнтĕ çак событисем хыççăнхи вăхăта илсе çырнă. Чăкка патне пырса кĕнĕ хусахсен ушкăнĕн утаманĕ чăвашсем хушшинче Пугачев мĕнле çӳрени çинчен, улпут таврашне мĕнле çĕмĕрни çинчен каласа парать.

«—Çук ĕнтĕ Пугачев! Çирĕç ун пуçне!.. Анчах манас çук эпир ун ĕçне!..
Ак вун çул иртет... Эпир унтанпа
Юлтăмăр виççĕн çеç ак çак ушкăнра;
Çӳретпĕр ишсе сĕм-сĕм вăрманпа —
Сăртан—Атăла, Атăлтан—Сăра,—»
тет вăл.

Çапла, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра сăнланса кăтартнă ĕçсем XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурпайĕнче (Пугачева вĕлерсен тепĕр вунă çул иртсен) пулса пыраççĕ. Вĕсем вара çак ĕмĕрĕн вĕçнелле çеç, тĕрĕсрех калас-тăк: XIX ĕмĕр пуçланнă вăхăтра, вĕçленсе пĕтеççĕ.

* * *

«Хĕн-хур айĕнче» поэма—социальнăй пысăк картина, историллĕ поэма. Унта историре чăннипех пулнă çынсем çук, темелле. (Анчах та Пахомка пирки çакна калас пулать: çак ят чăваш халăхĕ хушшинче паллă ят. Вăл историре пулнă çын ячĕ мар-ши?). Историри вăл—чăннипе обществăра, çĕршывра мĕн пулни, анчах илемлĕ литературăн историллĕ произведенийĕнче çынни вара—чăннипе обществăра, çĕршывра мĕн пулни, анчах илемлĕ литературăн историллĕ произведенийĕнче çынни вара—чăннипе мĕн пулни çеç мар, чăннипе мĕн пулма пултарни те.

Вырăс патши хăйĕн колонизаторĕсем политикине çине тăрсах туса пынă. Чăвашсем колонизаторсен пусмăрĕнчен тарса чăтлăх вăрмансене, упа каçми çырмасене кĕре-кĕре пытанса ларнă.

«Тарар сĕмлĕхе,
Пурнăр ирĕкре...
Пире пуçлăхсем унта тупас çук,—
Шутланă вĕсем куçса ларнă чух».

Вăхăт нумаях та иртмен, çав «сĕмлĕхсем» те сĕмлĕхсем пулма пăрахнă. Çăткăнсем вĕсене те шыраса тупа пуçланă.

«Анчах, инкеке, пытанчăк ялсем
Часах мĕн тухнă «тĕнче» куç умне;
Эсрел пек попсем, усал пуçлăхсем
Кунти кĕтессе те пуçланă çитме».

Çав сĕлĕхсем халăха куланайăкăн хĕсĕрленĕ, çивĕ хут тирне сӳнĕ, ватнă, хĕненĕ, вут тивретсе çунтарнă. Ĕç-халăхĕ кулаçăн вăхăтра татайман, çапла вара парăмсем ӳссех пынă, инкек çине инкек тиеннĕ. Çак картинăна Эльгер хăйĕн поэмин «Куланайăкăн» ятлă пайĕнче пĕтĕм чуна хумхантаракан сăнлăхсемпе кăтартса парать. Акă ватă Итапая вĕлерес пек хĕнеççĕ. Акă хĕнеççĕ ялти чухăна—Чаккана,—каллех юн пĕрĕхет.

Чĕрĕ юн сирпĕнсе пăрланнă вырăна
Чĕнсе кăларaççĕ пĕр çамрăк çынна.
Ку çын—хут çинче Якку ятлăскер,
Ялта, чăвашла—Чакка тенĕскер.
. . . . . .
Ак çамрăк пуçа хураççĕ чăсса,
Çири тумтирне илеççĕ хывса,
Пилеш хуллисем суйласа илсе
Пуçласçĕ ăна касса ислетме.
Ак çаннă йĕртен чĕр юн пĕрĕхсе
Шур юр çинелле каять сирпĕнсе...»

Çакă вăл—поэмăри тĕп герой чухăн Чакка. Вăл хĕсĕнсе-пĕсĕнсе çеç пурăнкалать. Чухăн хресчен Чакка—ун чухнехи ялăн, ун чухнехи стройăн пĕтĕм социальнăй пусмăрĕ айне пулнă хресченĕн сăнарĕ (тип). Кулланай вăхăтра тӳлесе тăма Чаккан укçа-тавраш çук. Унăн кулланай икĕ çул хушшинче тăвата тенкĕ те çирĕм пуса çитнĕ. (Кайран вара çичĕ тенкĕ патнех те çитет). Çавăнтах тата попĕ: «Тавай виçĕ тенкĕ! Тавай, халех туп!» тесе хĕстерет. Çак хырçă-марçăсемшĕн унăнне «çичĕ хут» тирне сĕвеççĕ, юнне ĕçеççĕ, пуçне çиеççĕ...

Ялти пуян—Алапит, никам умĕнче пĕр шит чакман, ун чухнехи ялăн мĕнпур «кĕтмен хăнисемпе» те: бурмис-тиекпе, поппа туслă пурăнакан пуян хресчен, пĕрмаях чухăн Чакка çине тăрать. Вăл, тиеке пылпа та çупа çавăрса, хăйĕн ывăлне салтак службинчен çăлса хăварать, унăн вырăнне ним хӳтсĕр Чаккана ямалла тутарать. Çапла ĕнтĕ, Чакка кĕтмен çĕртенех салтака каять. Икĕ çул пурăнсан, вăрах чирлĕ пулнă пирки, вăл каялла килет. Анчах та çак вăхăт хушшинче унăн кулланай татах та ӳссех пынă. Çавăн чухнех Алапитпа Чакка хушшинчи хирĕçӳсем те нумаях ӳссе вăйланнă. Çак социальнăй хĕскĕче Чакка туйса илмешкĕн тытăнать: «Иртнийĕ çеç мар, малашнехи те ăна хăратать, ним канлĕх памасть».

Чакка, кайрантарахпа, Пахом ушкăнне юрăхлă çын пулса тăрать. Вăрăхурах пулас тесе мар, ирĕке тухас тесе, пĕрлешет вăл çав ушкăнпа. Пугачев çыннисем те чат вăрă-хурахла ушкăн пулман. Вĕсен вăрă-хурахла ĕçсем пулнă пулин те, вĕсем ун чухнехи пусмăра хирĕç кĕрешекенсем пулнă. Çавăнпа та вĕсене Кушлавăшри чухăн хресченсем кăмăллаççĕ, мĕншĕн тесен «Пугачев ятне чĕртнĕ таркăнсем хĕн-хур çыннине хушаççĕ çунат».

Чакка вара мĕн май килнĕ таран кĕрешет. Пахомпа пĕрле вăл помещиксене, кантурсене, чиновниксене, попсене хирĕç кăна мар, ялти пуянсене хирĕç те кĕрешет. Пахомăн йĕркеленсе çитмен «программа та» пур, çакна эпир унăн «вырăсла-чăвашла каланă сăмахĕнче куратпăр. Вăл таçти çĕрулпучĕ çĕршыва касни çинчен, нӳхреп куçлă попĕ ĕмсе тăни çинчен калать; хресчене тăван вăрмана та касма чарни çинчен, сывлăн сывлăша та туртса илесси çинчен калать. Вăл Пугачев вăхăтĕнчи пек çĕкленме чĕнет: «Йăтар хĕçпăшал та каяр кантура... Çĕмĕрер кантура та, унтан—малалла...» тет вăл. Малалла!—çакă вăл, урăхла каласан, хресченсен вăрçине сарса пырас тенине пĕлтерет, Пугачев вĕт «нимĕнле улпута, нимĕнле пуçлăха... хĕрхенме хушман».

Анчах поэмăра кăтартнă Кушлавăш хресченĕсем иккĕленеççĕ, шикленеççĕ, хăраççĕ. Паллах, Пугачев вăхăтĕнче вĕсем пăлханнă, алла лекнĕ улпутсене чĕррĕн вĕçертмен. Пугачев восстанине путарса лартсан, Кушлавăшри хресченсене те хытă хĕсĕрленĕ, юнпа шăварнă. Çапла вара, çак юнлă вăхăта аса илсе, «Пăлхав тапратсан, каллех кĕт çавна», тет хресченсенчен пĕри. Вăл пуянсене пĕртак хăратасшăн: «Куштан та пулсан вĕсем хамăннах, улпут мĕн пулсан юрататчĕ касмах» тет вăл. Хресченсен пăлханăвĕ ку чухне малтанхи чухлĕ çĕкленеймест, Чакка ĕмĕчĕ те ĕмĕт пулнипех юлать. Вăл вара, ирĕке юратаканскер, яла хĕрхенсе, халăхшăн тăрса, хăйĕн тăван ялĕнчен уйăрăлса каять. «Ман урлă хĕн-хурлăх ан тивтĕр яла!»—çакăнпек ӳнăн юлашки сăмахĕ. Ку вăл хăраса ӳкни мар, хĕн-хур мĕнтери йывăр пулнине Чакка пĕтĕм чун-чĕрепе туять. Çав вăхăтрах вăл кирлĕ пек кĕрешме май çуккине те ăнланать. Чураляха, тискерлĕхе пĕтерес тесен, хресченсем пурте Пахом пек пулмалла, вара «ниçта та, никам чура пулас çук...» тет вăл улпут патĕнче ĕçлекен мужикене. Хресченсем хушшинче Пахом пек çынсем питех те сайра, çавăнпа та ăнăçлăн кĕрешме май çук, çаннипех вăл. Чакка хăй ĕнтĕ, çаннипех те Пахом пекех. Мĕн вилнченех вăл хăйĕн шухăшне, хăйĕн çулне çирĕп тытать.

* * *

Чакка чăваш халăх историнче пулнă çын мар терĕмĕр, анчах та вăл пĕрре те пурнăçра пулман çын пек мар: Чакка—чĕрĕ çын пекех, тен, историре Чакка пек çынсем темиçе те пулнă пулĕ,—тавçăрса илме йывăр мар,—вĕсем хăюллă та хастар пулнă, çутă ĕмĕтлĕ, тӳрĕ кăмăллă пулнă, тен, хăш чухне вĕсем йăнăшнă та, хăйсен юхăмне кансĕрлекен ĕçсене те хушăран тунă пулĕ,—çапах та вĕсем малалла турттаннă, халăх ĕмĕчĕпе пурăннă. Чакка вăл—халăхăн иксĕлми паттăрлăхне кăтартса тăракан герой. Эльгер хăйĕн çак произведенийĕнче чаккасен характерлă енĕсене пĕр çĕре, пĕр çынна пухса пĕрлештернĕ, вăл XVIII ĕмĕрти хресченсен пăлханăвĕсенче хутшăнса кĕрешекенĕн сăнарне (типне) тунă. Литературăра историйĕ енчен илсе пăхсан, эпир тӳрех çакна калама пултаратпăр: Чакка пирĕн литературăра çирĕплленсе юлнă тип пулса тăрать. «Хĕн-хур айĕнче» поэма—чăваш хресченĕсен XVIII ĕмĕрти пурнăçĕ çинчен çеç мар, вĕсен кĕрешĕвĕсем, пăлханăвĕсем çинчен те калакан поэма. Унăн историллĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта: вăл пире çав вăхăтри хресченсен вăрçисен характерне лайăхрах тавçăрса илме пулăшать. Чăн та, çак поэма эпир юратнă геройсем çĕнтерипе вĕçленмест. Ун чухнехи геройсем мĕншĕн çĕнтереймеминне иртнĕ ĕмĕрсенче Франçире, Германире, Российăра пулнă хресченсен восстанийĕсен историйĕ питех те уççăн каласа парать. Хресченсем сапаланса тата тĕттĕмлĕхре пурăннине пула, мĕншĕн кĕрешмĕ кирлине уççăн ăнланман. Вĕсем хăйсен тĕллевĕшĕн кĕрешме çирĕп организаци тата тĕреклĕ çар тăвайман. Ун чухне тата хресченсен, шанчăклă союзник—организациленнĕ рабочи класс пулман. Эльгер хăйĕн поэминче çак историллĕ самантсене аса тытса, вĕсене лайăх чухласа çырнă. Историллĕ эпохăна тĕрĕс кăтартса панăран тата историпе килĕшсе тăнăран «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна эпир чăннипех те историллĕ поэма тесе хаклатпăр. Вăл поэма хăйĕн содержанийĕнчи тĕрĕслĕхĕпе пирĕн совет литературинче чăннипех те чаплă вырăн йышăнса тăрать.

В. ДОЛГОВ.

Пахча-çимĕç ăстаçи Лебедев

Ку ĕç февраль уйăхĕн пуçламĕшĕнче пулчĕ. Ишлейри столовăй буфечĕ умĕнче тăракан нумай çынсенчен чылайăшне пĕр япала тĕлĕнтерчĕ. Буфет çулĕкĕсем çинче сап-симĕс сухан тăрать, симĕс çулçăллă сухан — халь çеç йăран çинчен кăкласа кĕнĕ пек, çулçисен вăрăмăшĕ çур метра яхăн.

Çав çынсемех апат çиме сĕтел хушшине ларсан яшка, котлет тата ытти çимĕççем çине сап-симĕс сухан тураса панине курчĕç, сĕтеклĕ апата çисе пăхрĕç.

Çак кунран пуçласа районри чылай колхозсенче Салапай суханĕ çинчен калаçма пуçларĕç.

— Вĕсем январь уйăхĕн вĕçĕнчех Шупашкара кайса симĕс сухан çеçки сутнă.

— Февраль уйăхĕнче симĕс сухан 6 пин те 500 тенкĕлĕх сутнă, мартра тата тепĕр çавăн чухлĕ сутмалла, теççĕ.

Симĕс сухан ӳстернĕ «Красное знамя» колхоз чапĕ пĕтĕм районĕпе сарăлнă. Колхоза экскурсисем пыма пуçланă.

Çак кунсенче «Агроном» колхозран пынă колхозниксем «Красное знамя» колхоз пахча-çимĕç тăвас ĕçпе мĕнле ĕçленипе тĕплĕн паллашрĕç. Пахча-çимĕç ĕçĕпе 6-мĕш çул бригадир пулса ĕçлекен 28 çулхи Прокопий Лебедев вĕсене хăйĕн ĕçĕ çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

1934 çулта, кĕркунне ватă колхозниксем колхозра пахча-çимĕç ӳстерме пысăк условисем пурри çинчен сăмах тапратнă. Тепĕр çулне, хĕлле парниксенче купăста, хăяр, помидор калчисем ӳсме пуçланă. Çавăн хыççăн колхоз кашни çулах хăяр, купăста, сухан тата ытти çимĕççене пысăк тухăçлă туса илет. Иртнĕ çулта пахча-çимĕççĕнчен 10 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă пулсан, 17 пин тенкĕлĕх тупăш илнĕ. 1939 çулта, теплицăсенче ӳстерсе арбуз туса илме тытăннăранпа, тупăш уйрăмăнах ытларах ӳссе пынă.

— Кăçал теплицăра январь уйăхĕнчех симĕс сухан ӳстертĕмĕр. Сухан сутса сахалтан та 15 пин тенкĕ тупăш илетпĕр.

— Хăнана килнĕ пулсан, хăналлах пултăр, каяр ман патăма, — тесе вĕçлерĕ Прокопий Лебедев хăйĕн сăмахне.

«Агроном» колхоз членĕсем питĕ таса та тирпейлĕ пӳрте пырса кĕчĕç. Тĕпелте сăмавар, пӳртĕн пĕр пӳлĕмĕнче тимĕр кровать, йĕри-таврах чечексем.

Кăçал пахча-çимĕç тăвассипе мĕнле ĕçлесси çинчен каланă вăхăтра пӳрте писмоносец пырса кĕчĕ.

— Сире валли çыру.

— Кăçал флота илнĕ Гурий Шăллăмран пулĕ-ха, — тет Прокопий.

Çук, çыру урăх çĕртен.

Вăл çырура ВКП(б) райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕ Прокопий Лебедева ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри слетне кайма делегата уйăрни çинчен пĕлтернĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Колхозсенчи штатсене йĕркелени

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чылай колхозсенче управлени аппаратĕ пысăк пулнă. «1-ое Мая» колхозра ĕçлеме пултаракан 200 колхозникран 33 çын администраципе управлени ĕçĕнче ĕçленĕ. Çаксене тытса тăма 1940 çулта 11874 ĕçкунĕ ытларах панă е вăл мĕнпур ĕçкунĕсенчен 35 процент шутланать. «Сĕнтĕрпуç» колхозра вылăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçре 23 çын, вĕсенчен 11 конюх, 4 скотник, икĕ кĕтӳç ĕçлеççĕ. Вĕсем туллин ĕçлемен пулсан та çулталăк хушшинче кашниех 475-шер ĕçкунĕ илнĕ.

Колхозсенче штатсене ӳстерсе янă пирки ĕç дисциплини япăхланнă, уйрăм колхозниксем колхоз производствине хутшăнмасăр тăнă. Колхоз председателĕн колхоза ертсе пырас вырăнне аппаратпа ертсе пымалла пулнă. Сăмахран, Аслă Шăхаль колхозĕнче администраци аппаратĕнче 50 çын ĕçленĕ. Колхоз председателĕн çакăн пек пысăк аппарата ертсе пынипех вăхăт нумай иртнĕ.

Уйрăм колхозсенче кирлĕ мар çĕртенех тĕрлĕрен штатсем шутласа кăларнă. Шурăлти Чкалов ячĕпе тăракан колхозра лаша вити патĕнчи картишĕнче пĕр çын тытса тăнă. Вăл колхозниксене хăмăтсем панă, каялла илнĕ. Çавăнтах тепĕр хуралçă пурăннă. Çапла пĕр çын тума пултарнă ĕçсемшĕн икĕ çын тытса тăнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ «Колхозсенчи управлени аппаратĕ çинчен» йышăннă постановленине районри колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çак постановленине пурнăçа кĕртсе пынă май, чылай колхозсем штатсене йĕркелерĕç.

Колхозсенчи штатсем пирки парти райкомĕн бюровĕнче сӳтсе-явнă, штатсене йĕркелес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăннă. Парти райкомĕн бюровĕ райĕрĕç пайне тата колхоз председателĕсене штатра тăракансене ĕçлемен кунсемшĕн ĕçкунĕ памалла марри тата администраципе хуçалăх расхочĕсене витме миçе ĕçкунĕ пĕтермелине кăтартса панă. Çавнашкалах колхозри тимĕрçĕсене, плотниксене уйăхсерен ĕçкунĕ шутласа пама чарнă, вĕсене ĕçе тата ĕçĕн пахалăхне кура тӳлеме хушнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановлението районри колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Çак постановлението

Европăри тата Африкăри вăрçă

(Вăрçă ĕçĕсен дневникĕ)

Мартăн 4-мĕшĕнче Албанири фронта пысăк мар çапăçусем пулса иртнĕ. Фронтăн центральнăй секторĕнче Греци войскисем итальянецсене малалла хĕссе пыраççĕ. Танксем пулăшакан Итали войскисем контрнаступлени пуçланă, анчах вĕсен наступленине сирсе янă.

Итали çарĕн верховнăй командованийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Итали самолечĕсем Греци войскисем çине тата противникăн оборона позицийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Итали çар карапĕсем Албани çыранĕнче вырнаçса тăракан противник объекчĕсем çине персе тăнă.

Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче вăрçă ĕçĕсем кăштах вăйланни палăрать. Итали самолечĕсем, тенĕ Итали сводкинче, Суди заливĕнче (Крит утравĕ) суднăсемпе порт сооруженийĕсем çине бомбăсем пырса пăрахнă. Çавăн пекех Германипе Итали авиацийĕ Мальта утравĕ çине пыра-пыра тапăннă.

* * *

Хĕвелтухăç Африкăра вăрçă ĕçĕсем Итали Сомалийĕнче вăйлăрах пулса иртнĕ. Англи сводкинче каланă тăрăх, Англи войскисем Иша-Байдоа тата Булобурти пункчĕсене туртса илнĕ (Могадишоран çурçĕр-хĕвеланăç енче).

Итали сводкинче каланă тăрăх, Эритрейăри Керен секторĕнче разведка тăвакан отрядсен ĕçĕсем палăраççĕ. Англири «Дейли мейл» хаçатăн Хартумри корреспонденчĕ Керен районĕнчи лару-тăру пирки çапла çырать: Мешелит перевалĕ çинчи (Керенран çурçĕр-хĕвелтухăç еннелле 22 километрта) вăйлă укрепленийлĕ позицисем çинчен чакнă хыççăн, Ансеба юханшывĕ юхса выртакан ущельере вырнаçса тăнă.

* * *

Англи фронтĕнче авиацин хăшпĕр активлăхĕ палăрать. Германи командованийĕн сводкинче çапла каланă: Ыран мартăн 5-мĕш тенĕ чух çĕрле Германи бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Кантăр Англири тĕрлĕрен çар объекчĕсем çине, Кардиффпа Лондонри портсемпе промышленность сооруженийĕсем çине пырса тапăннă. Ыран мартăн 4-мĕш тенĕ чух çĕрле тата мартăн 4-мĕшĕнче кантăрла, тет Рейтер агентстви, Англин çыранри оборона самолечĕсем Брест çывăхĕнчи аэродром çине тата Калери доксемпе чугунçул сооруженийĕсем çине пырса тапăннă. Мартăн 4-мĕшĕнче Англи тинĕс-çар вăйĕсем, Германи командованийĕн сводкинче каланă тăрăх, çурçĕр Норвеги çыранĕ патĕнчи пĕр утрава атакăланă.

Мартăн 5-мĕш. (ТАСС).

Прибалтикăри советлă республикăсем валли— ялхуçалăх машинисем

Прибалтикăри союзлă çамрăк республикăсем советлă пĕрремĕш çуркунне хатĕрленеççĕ. Çак республикăсенче организациленĕ машинно-тракторнăй станцисем ĕççынни хресченĕсене çураки ирттерес ĕçре пысăк пулăшу параççĕ.

Машинно-тракторнăй станцисенче хăватлă тракторсем пулаççĕ. Вăтам машиностроени наркомачĕн завочĕсем вĕсем валли сложнăй ялхуçалăх машинисемпе орудийĕсем çĕршерĕн ярса параççĕ. Çураки тĕлне станцисем тракторпа ĕçлемелли 5 корпуслă 800 плуг, 300 сеялка (24 ретлĕ сеялкăсем), дисклă нумай сӳресем, лущильниксем, культиваторсем, сцепкăсем, çĕрулми лартмалли машинăсем тата ытти те илеççĕ.

МТС-сем çумĕнче машинăллă-лашаллă прокат пункчĕсем организацилеççĕ, вĕсем ялхуçалăх ĕçĕ валли лашапа ĕçлемелли инвентарьсем парса тăмалла пулаççĕ. Çураки тĕлне çак пунктсем валли лашапа ĕçлемелли темиçе пин плуг, «зигзаг» сӳресем, окучниксем, пахча-çимĕç лартмалли сеялкăсем, трипсем ярса памалла.

Главсельмаш завочĕсем Прибалтикăри республикăсем валли тырпул пухса кĕртмелли машинăсемпе инвентарьсем ямă пуçланă.

Буржуаллă Литвара, Латвире тата Эстонире тракторсемпе сложнăй ялхуçалăх машинисем хăшпĕр помещиксемпе кулаксен хуçалăхĕсенче кăна пулнă. Совет государстви пулăшнипе Латвири, Литвари тата Эстонири ялхуçалăхĕ çĕнĕ техникăпа хĕпăшалланать. Кăçалхи çул çак республикăсен уйăрĕсенче пирвайхи хут тракторлă сложнăй машинăсем—нумай ретлĕ культиваторсем, тĕштырă акмалли тата сахăр кăшманĕ лартмалли сеялкăсем, çĕрулми лартмалли, йĕтĕн татмалли машинăсем ĕçлеме пуçласçĕ.

(ТАСС).

Çуртйĕрсем тума 200 пин тенкĕ укçа уйăрнă

Чăваш АССР Совнаркомĕ хуласенче пурăнмалли çĕнĕ çуртйĕрсем тума тата кивĕ çуртсене тĕпрен юсама 1941 çулта кивçен укçа уйăрса парасси çинчен постановлени йышăннă. Çак постановлени тăрăх çĕнĕ çуртйĕрсем тума пурĕ 75 пин тенкĕ укçа пама пăхнă. Вăл хисепрен Шупашкар хулинче çуртйĕрсем тума 40 пин тенкĕ, Канаш хулине 25 пин тенкĕ тата Çĕмĕрле хулине 10 пин тенкĕ параççĕ.

Çĕнĕрен çуртйĕрсем тума кивçен укçа панипе пĕрлех, хулара пурăнакан ĕççыннисене хăйсен çурчĕсене юсама пулăшас тĕлĕшпе 125 пин тенкĕ уйăрнă. Çак хисепрен Шупашкар хула Советне 37 пин тенкĕ, Канаш—15 пин тенкĕ, Улатăр—45 пин тенкĕ, Сĕнтĕрвăрри—15 пин тенкĕ, Етĕрне—8 пин тенкĕ тата Çĕрпӳ хулин Советне 5 пин тенкĕ памалла тунă.

Çĕнĕрен çуртйĕр тума тата хăйсен çуртне юсама килĕшекен ĕççыннисен кивçен укçа илме ыйтса хула Совечĕсене заявкăсем памалла. Ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕсене çак заявкăсем тăрăх хăйсене панă укçа-тенкĕне апрелĕн 1-мĕшĕнчен валеçме хушнă.

Кивçен илнĕ укçапа пурăнмалли çуртйĕрсем лартмалли çĕр участокĕсене хула Совечĕсен вăхăтра уйăрса памалла. Çавăн пекех вырăнти строительство материалĕсене илме пулăшмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ Наркомхоза тата Коммуналлă банка 1941 çултн июнĕн 15-мĕш тĕлне çĕнĕ çуртйĕрсем тăвас, кив çуртсене юсас плана мĕнле пурнăçа кĕртсе пыни çинчен отчет тăратма хушнă.

Колхозри стена хаçачĕ

«Ĕмĕт» колхозра тухакан «Ударник» хаçат çуракине хатĕрленес ыйтăва тăтăшах лайăх çутатса пырать. Çак кунсенче тухнă 9-мĕш номерте бригадăсем хĕллехи агротехникăллă ĕçсен планне тултарнине сводкăпа кăтартнă. Сводкăра çакă курăнать: колхоз пĕтĕмĕшпе илсен торф 1.123 тонна, тислĕк 1.400 лав турттарса кăларса штабельсем туса лартнă. Кусемсĕр пуçне минераллă удобрени 20 тонна кӳрсе хилнĕ.

Стена хаçачĕ тунă çитĕнӳсемпе лăпланмасăр, малашнехи çитĕнӳсемшĕн кĕрешме чĕнет.

Çĕрпӳ р.

ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПОЭТНЕ С. В. ЭЛЬГЕРЕ ЧЫСЛАСА ТУНĂ ЧАПЛĂ ПУХУ

Чăваш АССР халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер литературăра ĕçлеме пуçланă 20 çул тултарнă ятпа, мартăн 5-мĕшĕнче чăваш совет писателĕсем, искусство коллективĕсем тата Шупашкарти пĕтĕм совет общественноçĕ пуху туса ирттерчĕç.

Пуху Чăвашгосфилармонин концерт залĕнче пулчĕ.

Савăнăçлă пухăва уçнă май чăваш совет писателĕсен Союзĕн правлени членĕ И. Тукташ юлташ чăваш совет литературин пуçланса, ăнăçлăн аталанса пыни Семен Васильевич ячĕпе тачăн çыхăнса тăни çинчен, унăн творчестви чăваш халăхĕн обществăллă пурнăçĕнче, ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре пысăк вырăн йышăнса пыни çинчен каларĕ.

С. В. Эльгерĕн пурнăçĕпе творчести çинчен чăваш совет писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ А. А. Эсхель юлташ доклад туса пачĕ.

Совет литературинче тата кĕнеке-хаçат кăларас ĕçре С. В. Эльгерпа пĕрле ĕçленĕ Иван Мучипе Н. Васянка юлташсем, юбиляра саламласа, сăмахсем тухса каларĕç.

Поэт Янгас юбиляр ячĕпе килнĕ саламсене вуласа парать. Литературăра ĕçлеме пуçланă 20 çул тултарнă май С. В. Эльгере малашне те ăнăçлăн ĕçлеме сывлăх сунса çаксем саламсем янă: Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ, чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ, Украина, Грузин, Армян ССР совет писателĕсен Союзĕсен правленийĕсем, Мари, Мордва, Башкир АССР совет писателĕсен Союзĕсен правленийĕсем, искусство ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕ, Чăвашсен Государство Академи театрĕн коллективĕ, чăваш совет художникĕсен союзĕн правленийĕ, Чăвашгиз, Радиокомитет, Уйăп Мишшипе Алга поэтсем т. ыт.

Юлашкинчен юбиляр сăмах илет. С. В. Эльгер юлташ чаплă пухăва пынисене пурне те чĕререн тав тăвать, партипе правительство тата халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ писательсемшĕн тимлĕн тăрăшни çинчен, Совет Союзĕнче писательсем валли тухăçлăн ĕçлеме пур условисене те туса пани çинчен тата литература фронтĕнче малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хатĕр тăни çинчен калать.

Чаплă пуху хыççăн пысăк концерт пулчĕ. Чăваш АССР юрăпа ташă ансамблĕ чăваш халăхĕн авалхи юррисемпе хальхи, совет саманинчи, çĕнĕ юрăсене юрласа кăтартрĕ. Концерт вăхăтĕнче С. В. Эльгер сăввисене вуласа пачĕç.

ВКП(б) Обкомĕнче

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ Красноармейски районра фермăсем валли выльăхсем туянма çамрăк выльăхсене контрактацилес ĕç мĕнле пынине пăхса тухнă.

ВКП(б) Обкомĕ Красноармейски район выльăхсен переписĕ пулса иртнĕ хыççăн, фермăсем валли выльăхсем туянасси вăйсăрланнинне палăртнă. 1940 çулти декабрь уйăхĕнче колхозсем майракалла тултра выльăхсем 193 пуç тата 73 сысна туяннă пулсан, 1941 çулти январь тата февраль уйăхĕсенче вара мĕнпурĕ 110 пуç сысна çурисем кăна туяннă. Çамрăк выльăхсем туянма колхозниксемпе контрактаци тăвасси начар пулса пырать. Мартăн 4-мĕшне план тăрăх 650 пăру контрактацилес вырăнне 26 пăру çеç контрактацленĕ, сыснасемпе сурăхсене контрактацилеме пачах пуçăнман. Райçĕрĕç пайĕ контрактаци ĕçĕ начар пынине районра çамрăк выльăхсем сук, тенипе ăнлантарса пама пăхать. ВКП(б) райкомĕ райçĕрĕç пайĕн работникĕсем тата колхозсен правленийĕсем выльăхсене контрактацилес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине контроль туса тăрас ĕçе кирлĕ пек организацилемен тата çак ĕçре татăклă улшăнусем тума ыйтман.

Колхозниксем хушшинче массăллăăнлантарулла ĕçе япăх йĕркеленĕ, колхозри актив выльăхсене контрактацилессине ертсе пыман, хăйсен çамрăк выльăхсене контрактацилес тĕлĕшпе пример кăтартмасть, контрактаци тăвакансене выльăх апачĕ парса пулăшман.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕ парти райкомне колхозниксем хушшинче массăллăăнлантарулла ĕçе, контрактаци тăвакансене çамрăк выльăхсене пăхса çитĕнтерме колхозсем енчен выльăх апачĕ парса пулăшассине организацилеме хушнă.

Райçĕрĕç пайне тата райсовет исполкомне мартăн 20-мĕшчен государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне тултарнă тăрăх расчетсем тума, расчетсем тунă чухне кашни колхоз государствăна мĕн чухлĕ выльăх панине шута илме, фермăсем валли выльăхсем, уйрăмăнах ама выльăхсем туянса çитерес шутпа тунă плана колхозсен производствăллă планне тата приходпа расход сметине кĕртмелле тума хушнă.

Çавнашкалах парти Обкомĕ иртнĕ çулсенче колхозниксем çамрăк выльăхсене аш-какай тума пуснă фактсене шута илсе, райсовет исполкомне тата парти райкомне колхозниксен ытлашши çамрăк выльăхĕсене контрактацилес ĕçе сарса пыма хушнă, çамрăк выльăхсене пусма юраманни çинчен асăрхаттарнă.

Парти райкомне колхозсенче çамрăк выльăхсене мĕнле пăхса çитĕнтернине контроль туса тăма, çавăн пекех çуркунне вăхăтĕнче çамрăк выльăхсем вилесрен сыхлама хушнă.

Пĕрремĕш колхоз театрĕн гастролĕ

Республикăри пĕрремĕш колхоз театрĕ февраль уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнчи колхозсенче Маес тата Куличенко çырнă «Сады цветут» (вырăсларан Л. Агаков куçарнă) тата Шиллер çырнă «Коварство и любовь» (вырăсларан П. Осипов куçарнă) пьесăсемпе гастрольре çӳресе тавăрăнчĕ. Театр 16 колхозра пулса пĕтĕмпе 22 постановка пачĕ.

Колхозниксем театра ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ, спектакльсене курма нумайăн çӳреççĕ. 22 постановкăна пĕтĕмпе 4500 çын пырса курнă.

Постановкăсем пирки куракансен шухăш-кăмăлĕсене пĕлес тесе тата постановкăсен çитĕнĕвĕсемпе ситменлĕхсене палăртас ĕмĕтпе, театр постановкăсем хыççăн куракансемпе конференцисем ирттернĕ.

Куракансем колхоз театрĕн постановкисене аван хак параççĕ, хăшпĕр çитменлĕхсене тӳррĕнех асăрхаттараççĕ. Пуринчен ытла куракансем «Сады цветут» пьесăра Карп Иванович рольне вылякан Сергеев артистăн, Савели мучин рольне вылякан Ашуркин артистăн, Таня рольне вылякан Тимофеева артисткăн пултарулăхĕсене мухтаççĕ; вĕсем кăтартнă образсене аван хак параççĕ, «Коварство и любовь» пьесăра Луиза рольне чăн-чăн пурнăçри пек ĕнентерӳллĕ тата пысăк талантпа кăтартакан Рябова артисткăн пултарулăхне мухтаççĕ.

Театр гастроль вăхăтĕнче, постановкăсемсĕр пуçне, массăсем хушшинче те ĕçлесе пычĕ. Пуринчен ытла артистсем колхозри драмкружоксене пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлерĕç.

Март уйăхĕнче театр икĕ бригадăна уйăрлса ĕçлеме палăртнă. Пĕр бригада «Коварство и любовь» пьесăпа Шупашкар районĕнчи колхозсене тухса каймалла. Тепĕр бригади Саламбекăн «Велиме» пьесине хатĕрленсе çитсе Октябрьски районне кайма палăртнă.

Н. АМУРЦЕВ.

Хусанти Краеведени музейĕн ĕç планĕ

Хусанти Краеведени музейĕ наука тĕлĕшпе тĕпчевлĕ ĕçсем тума хăйĕн çулталăк планне çирĕплетрĕ.

Çав план тăрăх вăл кăçал Государствăн историллĕ музейĕ (Мускав) иртерекен археологиллĕ паха экспедицин ĕçĕсене тума хутшăнать. Кунта авалхи пăлхар халăхĕн историне тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе Булгар хулинче пысăк раскопкăсем тăваççĕ. Ку ĕç 1938 çултанпах пырать.

Музейăн вырăнти çутçанталăка вĕренекен работникĕсем Хусан çывăхĕнчи Ранфаки заповедникне тĕпчеççĕ. Научнăй сотрудник Э. В. Кудряшова юлташ пулă ĕрчетекен колхозăн хуçалăхне сăнама пулчĕ. Тутар АССР искусствăн тава тивĕçлĕ деятелĕ П. М. Дульский юлташ тутар халăхĕн кукчухнехи искусствине сăнать.

Май тата июнь уйăхĕсенче тĕрлĕ экспедицисем фольклор пухма аякри районсене тухса каяççĕ. Çав экспедицисене историксем, фольклористсем, художниксем тата фотографсем хутшăнаççĕ. Краеведени музейĕн археологĕсем Н. Ф. Калинин тата А. М. Ефимова юлташсем Казанка шывĕ тăрăхĕнчи кеолик тата калеолик тапхăрĕнчи памятниксемпе могильниксене сăнаса пĕлме ăрасна экспедици тăваççĕ.

Г. Макаров.

СУД

Вăрман хатĕрлевĕнчен пăрăнса тăнăшăн

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Красная Шатьма» колхозăн колхозниксем Вăрнар вăрманпромхозĕнче ĕçлеççĕ. Вăрман касма ытти колхозниксемпе пĕрле М. Львов та кайнă пулнă. Анчах вăл йĕркеллĕ ĕçлеме пуçличченех тарса килнĕ. Хăйпе пĕрле тата 7 колхозника каялла илсе тавăрннă. Çитменнине вĕсем касса хатĕрленĕ вутта десятник аллине памасăрах тавăрннă.

Вăрман хатĕрлевĕнчен пăрăнса тăнăшăн тата ытти колхозниксене ку ĕçрен пăрса хăварма пăхнăшăн М. Львова халăх суччĕ 2 çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

П. МАЙОРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКИЙ ФИЛИАЛ УЧЕБНОГО КОМБИНАТА ЦУНХУ ГОСПЛАНА СССР

(г. Чебоксары, ул. Канашская. 18, тел. № 5—69)

открыл прием на платные курсы счетоводов и бухгалтеров

промышленных, торговых предприятий и колхозов

и повышения квалификации счетоводов колхозов

Срок обучения от 2 до 5 месяцев с отрывом от производства.

Заявления принимаются до 25 марта 1941 года.

Условия приема опубликованы в газете „Красная Чувашия" за 25 февраля 1941 года № 46.

2—1

ЮТÇĔРШЫВСЕНЧЕ

* Çак кунсенче Бомбея вăрçăра тыткăна лекнĕ 6.700 итальянеца илсе пынă. Хальхи вăхăтра Индире тыткăна лекнĕ итальянецсем 32 пин çын шутланаççĕ.

* Пенджаб (Индия) губернаторĕ пĕр çулталăк хушши демонстрацисем тума чарнă. Вилнĕ çынсене пытарас ĕçпе тĕн процессийĕсене ирттерме ятарласах ирĕк ыйтса илмелле.

* Калькуттăри суд 40 индеец-моряка виçшер уйăх хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă тата вĕсем çине штраф хунă, мĕншĕн тесен вĕсем порт-Саидран Англине пароходпа кайма килĕшмен. Çĕнĕ командăна тытма пароходăн Бомбея тавăрăнмалла пулнă.

* Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нумай японецсем Голланди Индийĕнчен тухса каяççĕ.

* Кăçалхи январь уйăхĕнче США-ран урăх çĕршывсене 40.900 пин долларлăх авиаци моторĕсем сутнă. Иртнĕ çултн декабрь уйăхĕнче 32.100 пин долларлăх сутнă пулнă. Çав авиамоторсен чи пысăк пайне Англине ăсатнă.

* Эйрен оборона ĕçĕсене йĕркелесе пырас тĕлĕшпе ĕçлекен министрĕ хĕçпăшал таврашĕ туянма мартăн 5-мĕшĕнче США-на вĕçсе каять.

Комсомолецсен Пĕтĕм Союзри кросĕнче çĕнтерсе мала тухнисем

ВЛКСМ Центральный Комитетĕнче комсомолецсен Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă ятпа пулнă Пĕтĕм Союзри йĕлтĕрлĕ кросĕн татăклă итогĕсене тунă. Союз тăрăх пурĕ кроса 6.120.000 çын хутшăннă. Вĕсенчен 5.197.243 çынни (84,9 процент) ГТО комплексĕн йĕлтĕрлĕ тата çуран нормисене панă.

Союзлă республикăсенчи комсомол организацийĕсем хушшинче Карело-Финн СС Республикинчи комсомолецсем малта пыраççĕ. Иккĕмĕш вырăна Киргиз СС Республикинчи комсомолецсем, виççĕмĕш вырăна Белорус СС Республикинчи комсомолецсем йышăннă. Комсомолăн облаçсемпе крайĕнчи организацийĕсем хушшинче пĕрремĕш вырăна комсомолăн Ленинград облаçĕпе хулинчи организацийĕсем тухнă, иккĕмĕш вырăна — Мускав облаçĕпе Мускав хулинчи организацисем, виççĕмĕш вырăна — комсомолăн Орджоникидзе крайĕнчи организацийĕ тухнă.

Ăмăртусенче юлашки вырăнсене комсомолăн Дагестанри, Атăл çинчи Нимĕçсен АСС Республикинчи, Омск облаçĕнчи, Алтай крайĕнчи тата Çурçĕр-Осетин АСС Республикинчи организацийĕсем йышăннă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕ çапла çирĕплетнĕ: кросс — традициллĕ кросс пулса тăмалла. Малашне ăна кашни çулах ирттереççĕ. (ТАСС).

ГТО нормисенчи улшăнусем

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ «Готов к труду и обороне СССР» комплексĕн положенийĕпе нормативĕсене кĕртмелли хăшпĕр улăштарусемпе хушусене—физкультурăпа спорт ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Пĕтĕм Союзри Комитечĕ тăратнă улăштарусемпе хушусене çирĕплетнĕ.

БГТО значокне илмелли нормăсене пама малашне, врач ирĕк панă тăрăх, çирĕп ӳт-тирлĕ, сывлăхлă, 13 çула çитнĕ подростоксем пултараççĕ. ГТО комплексĕн пĕрремĕш ступеньри нормисене 16 çула çитнĕ яшăсемпе хĕрачасем пама пултараççĕ. Иккĕмĕш ступеньри нормăсене 17 çула çитнĕ яшĕсемпе хĕрачасем пама пултараççĕ (врач ирĕк панă тăрăх).

Комплексăн нормативне кĕртнĕ хушусем физкультурниксен военно-прикладной хатĕрлевне вăйлатма пулăшаççĕ. Çапла, сăмахран, гимнастика нормисене (пĕтĕмĕшле нормăсемпе требованисен группи) панă чухне, «зарядка» йышши упражненисĕр пуçне, физкультурниксем стройпа çӳреме вĕренсе хăнăхни кирлĕ. Кунсăр пуçне, ГТО комплексĕн пĕрремĕш ступеньри гимнастика нормисене паракан арçын физкультурниксен перекладка çинче алă виççĕ çĕкленмелле, иккĕмĕш ступеньри нормăсене панă чухне вĕрен е шалча тăрăх хăпармалла пулать (çакă вăл халичченхи нормативсенче пулман). Пăшалтан пемелли нормативсене те улăштарнă. Вĕсене Хĕрлĕ Çарта пĕчĕк калибрлă пăшалтан пеме вĕренес ĕçре лартакан требованисемпе килĕштерсе тунă.

«Равновесие» комплексăн пиллĕкмĕш группинчи суйласа илсе памалли нормăсене парас ĕçĕн условийĕсене, чăрмавсем урлă каçса тухнă чухнехи зачет условийĕсене кăштах йывăрлатнă.

Санитари ĕçне вĕренсе хатĕрлемелли требованисене «Готов к санитарной обороне» значокне илме хатĕрленмелли программăпа килĕштерсе тунă.

ТАСС).

Кок-сагыз акса тăвакан çĕнĕ районсенче

Халиччен Ровно облаçĕнчи колхозсенче кок-сагыз акса туман. Хальхи вăхăтра 20 колхоз каучуконоссем акса тума йышăннă. Çак ĕç валли 10-шар гектар паха çĕр уйăрнă. Верба районĕнчи сентябрĕн 17-мĕш ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем гектартан 20-шер центнер кок-сагыз тымарĕ туса илме сăмах панă. Вăрлăхсене хатĕрлесе хунă.

Улетуйри опытлă уйра (Бурейск районĕ, Амур облаçĕ) иртнĕ çулта опытлă участок çинчен кашни гектар пуçне 40 центнер кок-сагыз тымарĕ тата 75 килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ туса илнĕ. Кăçалхи çул Бурейск районĕнчи икĕ колхоз кок-сагыз акса тума пуçлаççĕ.

ВРАЧ КАНАШĔСЕМ

Хĕрлĕ шатра чирĕ

Хĕрлĕ шатра хăвăрт ерекен чир. Пуринчен ытларах хĕрлĕ шатра чирĕпе ача-пăчасем чирлеççĕ. Çав чир пĕр ачаран тепĕр ачана часах ерет. Чирлĕ ача выртакан пӳртре темиçе минута хушши тăрсан хĕрлĕ шатра ерме пултарать. Чире ача ăшĕнчен тухакан микробсем сараççĕ.

Чир ерсен, ача чирлесе ӳкиччен 8—10 кун иртет. Çав вăхăта сисĕмсĕр вăхăт теççĕ. Сисĕмсĕр вăхăт иртсен чир палăрма тытăнать: ача ӳтпĕвĕ вĕриленет, çутă çине пăхăйми пулать, куççуль юхма пуçăнать, çăвар ăшчикки хĕрелет, питçăмарти çинче шурă тĕслĕ пăнчăсем палăраççĕ. Тăваттăмĕш е пиллĕкмĕш кунта шатра тухма тытăнать. Вăл чи малтан питĕкуçа тухать, каярах, ик-виç кун хушшинче пĕтĕм çап-çурăма: алăсене, урасене саваллать. Шатрасем хĕрлĕ пăнчăсем пиçĕхнипе аптраççĕ.

Хĕрлĕ шатра чирĕ пуринчен ытла рахитлă, таса мар пӳрт-çуртра пурăнакан, уçă сывлăшра сахал пулакан, начар апат-çимĕçпе пурăнакан ачасемшĕн хăрушă пулса тăрать. Çакăн пек ачасем хĕрлĕ шатра чирĕпе чирленĕ вăхăтра вĕрĕлмесĕр иртни сахал пулаççĕ, ытларах вилеççĕ.

Ачасене хĕрлĕ шатра чирĕнчен сыхлас тесен, вĕсене çав чирпе чирленĕ çурта яма юрамасть. Пĕр ача хĕрлĕ шатра чирĕпе чирлесен, унпа пулнă ачасене пурне те чир ерме пултарать. Вĕсене хĕрлĕ шатраран сыхлакан прививкăсем тунипе хăна хăтарма пулать.

Хальхи вăхăтра ачасене хĕрлĕ шатрапа чирлесе иртгернĕ çынсен юнĕнчен тунă сывороткăпа сыватаççĕ. Хĕрлĕ шатраллă ачапа пĕрле пулнă ачасене çав сывороткăпа прививка тăваççĕ. Прививкăна вăхăтра тутарма тăрăшас пулать. Прививка вăхăтра тунă ачасем чирлемеççĕ е чирлесен те вĕсен чирĕ çăмăллăн иртет.

Врач А. Фадеева.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн —4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн—2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн—6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн—0—85, издательство конторин—0—23.

№ 2686

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 191. Ф. Б. 58×84 п. л.